ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ИНВАЛИДСЕМ ВАЛЛИ ЕҪ ВЫРĂНЕСЕМ КВОТĂЛАССИ ҪИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ҪИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи чӗк уйăхĕн 21-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче инвалидсем валли ĕç вырăнĕсем квотăласси çинчен" 2011 çулхи чӗк уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 68 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2012, 92 № (I том); Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 5, 11 №-сем; 2014, 2 №; 2015, 5 №; "Республика" хаçат, 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2022, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) кӗртĕм хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

2) 1 статья хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

3) çакăн пек çырса 1^1 статья хушса хурас:

"1^1 статья. **Çак Саккун йĕркелекен ыйтусем**

Çак Саккун Федерацин "Раççей Федерацийĕнче халăха ĕçпе тивĕçтересси çинчен" 2023 çулхи раштав уйăхĕн 12-мĕшĕнчи 565-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӗллĕн Чăваш Республикинче инвалидсене ĕçе илмелли квотăсем палăртас енĕпе пулакан уйрăм хутшăнусене йĕркелет.";

4) 2 статьяна çакăн пек çырса хурас:

"2 статья. **Инвалидсене ĕçе илмелли квотăна тата инвалидсене ĕçе вырнаçтармалли ятарлă ĕç вырăнĕсен шутне палăртасси**

1. Ёçлекенсен шучё 35 çынран иртекен ёç паракансем валли инвалидсене ёçе илмелли квотăна Чăваш Республикин Министрсен Кабинечён йышăнăвёпе ёçлекенсен списокёпе пăхнă вăтам хисепён 2 процентёнчен пуçласа 4 проценчё таран виçепе федерацин ёç тăвакан влаçён халăха ёçпе тивёçтерес сферăра патшалăх политикине туса хатёрлес тата пурнăçлас тата ăна нормативлă право тёлёшёнчен йёркелесе пырас енёпе ёçлекен органё Раççей Федерацийён саккунёсемпе килёшӳллён çирёплетнё методика сёнёвёсемпе килёшӳллён палăртаççё.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечё инвалидсене ёçе илмелли квотăн уйрăммăн палăртакан виçине федерацин ёç тăвакан влаçён халăха ёçпе тивёçтерес сферăра патшалăх политикине туса хатёрлес тата пурнăçлас тата ăна нормативлă право тёлёшёнчен йёркелесе пырас енёпе ёçлекен органё Раççей Федерацийён саккунёсемпе килёшӳллён çирёплетнё методика сёнёвёсемпе килёшӳллён палăртма пултарать.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечё инвалидсене ёçе илмелли квотăн уйрăммăн палăртакан виçине çирёплетнё чухне экономикăн тёрлё ёç-хёл тёсё валли, Чăваш Республикин тёрлё муниципаллă пёрлёхё валли, ёçлекенсен списокпа пăхнă вăтам хисепё тёрлёрен шутланакан ёç паракансем валли критерисем палăртать.

2. Инвалидсене ёçе вырнаçтармалли ятарлă ёç вырăнёсен шутне Чăваш Республикин Министрсен Кабинечё полномочи панă Чăваш Республикин ёç тăвакан органё кашни ёç паракан валли инвалидсене ёçе илмелли палăртнă квота шайёнче палăртать.";

5) 3, 4 статьясем хăйсен вăйне çухатнă тесе йышăнас;

6) 6 статьяра "Чăваш Республикин ёç тăвакан власть органё" сăмахсене "Чăваш Республикин ёç тăвакан органё" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йёркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кёрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхё О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи чӳк уйăхён 22-мёшё
80 №